# Ҫӗнтерӳ ҫулӗ

1930 ҫулхи ноябрӗн 1-мӗшӗнчен тухать

сайт адресӗ: putpobedy.ru

электронлӑ адрессем: press_vurnar@rchuv.ru svetok11@mail.ru

ВӐРНАР РАЙОН ХАҪАЧӖ 2025 ҫул кӑрлач /январь/ уйӑхӗн 21-мӗшӗ • ытларикун • 4/11851 № • Хакӗ ирӗклӗ •


# Пичет кунӗнче ӗҫтеше – сумлӑ награда

Шупашкарта Раҫҫей тата Чӑваш пичечӗн кунӗсем ячӗпе савӑнӑҫлӑ мероприяти иртрӗ. Унта Вӑрнар район хаҫачӗн ӗҫченӗсем те хутшӑнчӗҫ




■ В.Горбунов И.Свечкинана чыслать самант.

## ЧЫСЛАВ

Официаллӑ пай пуҫланиччен ытти массӑллӑ информаци хатӗрӗсенчи ӗҫтешсемпе, журналистикӑна пӗр вӑхӑтра вӗреннисемпе, преподавательсемпе калаҫма май пулчӗ. Вӑрнарсем те, ку тытӑмра тимлекенсем, – Хурӑн Кӑкшӑмри Владимир Тимофеев, Кӗҫӗн Кипекри Валентина Багадерова, Хурӑнсур Ҫармӑсри Василий Кузьмин, Малтикас Ялтӑрари Вероника Павлова – уява хутшӑнчӗҫ.

Ҫакӑ та кӑмӑла ҫӗклерӗ. Фойере уява килекенсене пичет тытӑмӗн аталанӑвне сӑнлакан курав кӗтсе илчӗ. Сӑнӳкерчӗксенче вӑрнарсем те пурри савӑнтарчӗ.

Республикӑри массӑллӑ информаци хатӗрӗсен ӗҫченӗсене Раҫҫей Патшалӑх Думин депутачӗ Анатолий Аксаков, ЧР Министрсен Кабинечӗн Председателӗн заместителӗ – экономика аталанӑвӗн тата пурлӑх хутшӑнӑвӗсен министрӗ Дмитрий Краснов, ЧР цифра аталанӑвӗпе информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министрӗ Михаил Степанов тата ыттисем саламларӗҫ.

Яваплӑ ҫынсем массӑллӑ информаци хатӗрӗсен представителӗсен ӗҫ-хӗлне пысӑк хак пачӗҫ. «Журналистсен сӑмахӗ ҫулран-ҫул ҫивӗчрех те ҫивӗчрех, ӑс-хакӑл мулӗ пысӑкрах, вӗсен ретӗнче ҫамрӑксем те курӑнаҫҫӗ. Вӗсем халӑхри шухӑша йӗркелеҫҫӗ, ҫивӗч ыйтусемпе сӗнӳсене влаҫ патне ҫитерсе вырӑнлӑ йышӑнусем тума пулӑшаҫҫӗ», – палӑртрӗҫ сумлӑ хӑнасем. Чӑваш пичечӗн отраслӗ паян ҫӗнӗ йӗркелӳ тапхӑрӗнче аталаннине каларӗҫ. Тытӑм ӳсӗмне тӳпе хывакан кашни журналиста, полиграфиста, калӑплавҫа, редактора тав турӗҫ, тӗрлӗ наградӑсемпе чысларӗҫ.

Палӑртма кӑмӑллӑ. Пирӗн маттур ӗҫтеш – «Ҫӗнтерӳ ҫулӗ» хаҫатӑн дизайнерӗ Инга Свечкина Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн Хисеп грамотине тивӗҫрӗ. Сумлӑ хута вӑл Виктор Горбунов депутатӑн аллинчен илчӗ.

Инга Валерьевна редакцире 20 ҫул ытла тӑрӑшать. Хаҫат калӑплас ӗҫе пурнӑҫланипе пӗрлех профсоюз ӗҫне йӗркелесе пырать.

Сӑмах май, уявра ентеш-журналистсем Вероника Павловапа Василий Кузьмин та наградӑсене тивӗҫрӗҫ.

Массӑллӑ информаци хатӗрӗсен ӗҫченӗсене «Глянец» ушкӑн, Алексей Московский юрӑҫ та саламларӗҫ.

**Светлана ЧИКМЯКОВА**

## ЯЛ ХУҪАЛӐХӖ

# Хуҫалӑхсене – пулӑшу

**Пӗлтӗр республикӑри виҫӗ хуҫалӑх мелиораци проекчӗсене пурнӑҫа кӗртнӗ. Вӗсен пӗтӗмӗшле хӑватлӑхӗ 478 гектар уй-хирте усӑ курма ҫитӗ. Ҫак ушкӑнри хастарсенчен пӗри – пирӗн округри «Мураты» ял хуҫалӑх производство кооперативӗ.**

Паллах, кирлӗ ҫӗнетӳ ӗҫӗсене ирттерме хуҫалӑхсем сахал мар укҫа-тенкӗ янӑ. Патшалӑх пулӑшӑвӗпе усӑ курса вӗсем тӑкаксен 50 процентне чухлӗ компенсаци илме пултараҫҫӗ. Федераллӑ программӑпа субсидие тивӗҫме проектсене конкурс суйлавне тӑратнӑ. Чӑваш ен ял хуҫалӑх министрӗ Сергей Артамонов палӑртнӑ тӑрӑх, ку енӗпе бюджетра 27 млн тенкӗ пӑхса хӑварнӑ.

Уйрӑммӑн илсен, «Мураты» хуҫалӑх «Звезда» тата Ульянов ячӗллӗ колхозсен хуҫалӑхсем хушшинчи шӑвару системин техника ҫӗнетӗвӗшӗн субсиди илме пултарать. Сӑмах май, стационарлӑ «ҫумӑр» машинисене 260 гектар лаптӑк ҫинче усӑ курӗҫ.

Ҫакӑн евӗр агрегатсемшӗн тӑкаксен саплаштарӑвне тивӗҫме пултаракансен шутӗнче ҫавӑн пекех – Патӑрьелти улма-ҫырла питомникӗ тата Вӑрмар округӗнчи «Каспий-Агро» общество. Ку техника хатӗрӗсем шӑрӑх, типӗ ҫанталӑкра ял хуҫалӑх культурисене йӗркеллӗ ӳсме, тухӑҫлӑха темиҫе хут пысӑклатма пулӑшаҫҫӗ.

**Ирина ПЕТРОВА**

# Тӗрлӗ грантсем пур

**Патшалӑх пулӑшӑвӗ хуҫалӑхсене аталантарма тӗрев парать. Конкурс витӗр тухса икӗ гранта тивӗҫме пултараҫҫӗ. Пӗри – «Агромотиватор», тепри – «Чӑваш хӑмли». «Агромотиватор» – федерацин пулӑшу виҫи.**

Ку гранта СВО ветеранӗсем тата ятарлӑ ҫар операцине хутшӑнакансем валли хатӗрленӗ. Вӗсен пулӑшӑва тивӗҫес тесен АПК-ра предприниматель ӗҫне пуҫӑнмалла.

«Чӑваш хӑмли» гранта «Агро ӳсӗм-2030» стратеги тӗллевӗсене пурнӑҫлама ӗҫе кӗртеҫҫӗ.

Патшалӑх пулӑшӑвӗпе усӑ курса ятарлӑ техника, оборудовани, хӑмла хунавӗсем туянма пулӗ.

## ҪАНТАЛӐК

| | Кӗҫнерникун 23.01 | Эрнекун 24.01 | Шӑматкун 25.01 |
|---|---|---|---|
| кӑнтӑрла | -8 | -7 | -7 |
| ҫӗрле | -8 | -11 | -6 |

*«Яндекс погода» информацийӗ тӑрӑх.*

## УЙӐХ КАЛЕНДАРӖ

| Число | | 23.01 | 24.01 | 25.01 |
|---|---|---|---|---|
| Хӗвел | тухать | 08.00 | 07.59 | 07.57 |
| | анать | 16.05 | 16.07 | 16.09 |
| Кун тӑршшӗ | | 08.05 | 08.08 | 08.12 |
| Уйӑх тӑхри | | катӑлса пырать | катӑлса пырать | катӑлса пырать |
| кунӗ | | 24 | 25 | 26 |

# Фронта – тата икӗ машина




**Эрне вӗҫӗнче «ZOV Вурнары» волонтер ушкӑнӗ пулӑшнипе фронта тата икӗ автомобиль ӑсатрӗҫ. «Нива» машинӑна Вӑрнар чиркӗвӗн прихучӗ пулӑшнипе туяннӑ. Тӗне ӗненекенсем пӗтӗмпе 250 пин тенкӗ пуҫтарнӑ. Ҫак суммӑран 200 пин тенки техника туянма кайнӑ.**

«Нивӑпа» Мӑн Явӑш каччине Григорий Кошкина тивӗҫтернӗ. Хушма 120 пин тенке машина валли унпа пӗрле службӑра тӑракансем пуҫтарнӑ.

Григорий ятарлӑ ҫар операцине 2022 ҫулта тулли мар мобилизаци йӗркипе лекнӗ. Йышӑну тухнӑ вӑхӑтра вӑл Мускавра ӗҫленӗ, ҫавӑнпа ӑна унтанах ҫара илнӗ. Тивӗҫрен юлма май та пулнӑ унӑн, анчах та каччӑ урӑхла утӑм тума пултарайман – ҫӗршыв ирӗклӗхне сыхлама чӗре ыйтнипе тӑнӑ.

Килте ӑна мӑшӑрӗ, ачисем кӗтеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та Григорий тӑшман путланасса шанать. «Ҫӗнтерӳ пурпӗр пирӗн алӑра пулать!» – терӗ вӑл ҫирӗппӗн. Салтак служба вырӑнӗнче мирлӗ халӑха пулӑшнине, вӗсене тепӗр чух апат-ҫимӗҫпе тивӗҫтернине каларӗ.

Тепӗр автомашинӑна –УАЗ-а – Кӗҫӗн Кипекри Сергей Сергеев валли уй условийӗсенче ҫӳреме вӑйлӑлатнӑ. Сӑрлас, шиномонтаж ӗҫӗсене Калининӑри Николай Бизиковӑн «Лидер», техника юсавне Вӑрнарти Владимир Егоровӑн «СТО Гараж» автомастерскойӗсенче пурнӑҫланӑ.

«ZOV Вурнары» ушкӑн ертӳҫи Артур Михайлов автотехцентр пуҫлӑхӗсене, ҫавӑн пекех вӗсенче тимлекен мастерсене Андрей Орлова, Дмитрий Тракова тата Виталий Белова (АТЦ ЛИДЕР), Артем Белкова тата Сергей Овчинникова (СТО ГАРАЖ) тав сӑмахӗ калать.

Ҫавӑн пекех Вӑрнар чиркӗвӗ панӑ 50 пин тенкӗпе хӑватлӑ резинӑсем туяннӑ.

Автомобильсене ҫула тухиччен иккӗшне те Вӑрнар храмӗн настоятелӗ Александр Панзин ҫветтуй шывпа сирпӗтрӗ, инкексенчен сыхланма, Турӑ хӳттинче ҫӳреме кӗлӗ вуларӗ, кабинӑна турӑш ҫирӗплетрӗ.

Каламалла, служба вырӑнне салтаксем отпускран иккӗшӗ те автомобиль рулӗ умӗнче таврӑнӗҫ.

«ZOV Вурнары» ушкӑн салтаксем урлӑ ентешсем валли гуманитари пулӑшӑвӗ те ӑсатрӗ. Вӑл шутра – маскировка сеткисем, окоп ҫуртисем, нуски-труҫҫисем, апат-ҫимӗҫ, пурнӑҫ браслечӗсем тата ытти те.

Фронтпа тыл пӗрле чухне ҫӗнтерӳ пулатех!

**Светлана ЧИКМЯКОВА**

# Йывăрлăхран хăрамасть

**Пирĕн тăрăхра пĕр икĕ-виçĕ çул почтальонсем пĕрин хыççăн тепри ĕçрен пăрахма пуçларĕç. Çакă пĕтĕмпех ĕç укçине пĕчĕклетнĕ пирки пулчĕ.**


А.Григорьева.

## ЫРĂ ТĔСЛĔХ

Малтикас Ялтăрапа Уйкас Ялтăрари почтальонкăна Зинаида Кондратьевăна илсен, вăл мĕн пенсие тухиччене тăрăшса, чунне парса ĕçлерĕ.

Аçăмçырмари почта уйрăмĕн пуçлăхĕ декрет отпускне кайсан, Вăрнартан тăватă çул каялла Анастасия Юрьевна Григорьевăна ячĕç. Икĕ çул почта уйрăмĕн пуçлăхĕнче тăрăшрĕ, анчах та почтальонсем ĕçлеме пăрахнă пирки специалиста Ишлĕ, Аçăмçырми, Уйкас Ялтăра ялĕсене çирĕплетрĕç. Пĕр çыннăннах пуçлăх та пулмалла, хаçат-журнал та валеçмелле тата ытти ĕçсене те пурнăçламалла. Ялти çынсене газ, çутă квитанцийĕсене, пенсисене çитерсе памалла. Вăрнартан машина ярса параймасан çынсене шăнкăравласа пĕлтерет.

Ватăсене газшăн, çутăшăн квитанцисене тӳлесе килсе парать, вăхăтра хаçатсем çырăнтарма тăрăшать. Хисеплетпĕр Анастасия Юрьевнăна. Вăл ĕçчен те маттур, ял çыннисем мĕн ыйтнине тивĕçтерет. Анчах та ĕçрен тухса каясран шиклентпĕр. Йывăрлăхран хăрамасть, шанса панă ĕçĕнче кăмăллăх тăрăшать.

Анастасия Юрьевна, сана эпир çирĕп сывлăх, ĕçĕрте ăнăçу, пурнăçăрта телей сунатпăр, 2025 çулта ĕçлеме Турă вăй-хал парса, пулăшса пытăр.

**Нина ПАРАМОНОВА**
Малтикас Ялтăра

# Маттурсем!



**Хапăсри вăтам шкулта хăс-тăн вăййи иртнĕ. Вăрманкас шкулĕн вĕренекенĕсем вырăс чĕлхине лайăх пĕлнине çирĕплетнĕ.**

Пур задание ăнăçлă пурнăçласа пĕрремĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Шкул чысне Дамир Краснов, Дарья Кондратьева, Аркадий Лукин, Радомир Степанов хӳтĕленĕ.

Каласа хăвармалла, Дамир Краснов пĕлтĕр «Çĕнĕ çул асамлăхĕ» республикăри пултарулăх конкурсĕнче те çĕнтернĕ. «Харпăр хăй аллипе ăсталанă Çĕнĕ çул кĕтменлĕхĕсем» номинацире мала тухнă.

# Саламлатпăр!



Хаклă та хисеплĕ çыннăмăра – **Ярмушкара пурăнакан Алексей Иванович ПАВЛОВА** – çуралнă кунĕ ячĕпе саламлатпăр. Алеша, сана хурçă пек çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, çăлкуç таппиллĕ вăйхал, вăрăм кун-çул, ăнăçу сунатпăр. Ялანах хальхи пек ырă та тарават пул. Мĕн палăртни, шухăшлани пурнăçлантăр. Кӳршĕ тăванран та хаклăрах та çывăхрах теççĕ. Чăн та, пирĕн кӳршĕ Алеша яланах пулăшма хатĕр. Питĕ пысăк тавтапуç.

*Санпала ялан çӳреччĕр ĕмĕт, шанчăк, юрату.*
*Кунусем телейпе тулччăр, питре çиçтĕр йăл куллу.*

**Ырă сунса, хисеплесе – кӳршĕри Лена акка.**



Пире пурнăç парнеленĕ аннемĕре **Надежда Васильевна СЮМАЙКИНА** тесе чĕнеççĕ. Вăл Хапăс ялĕнче пурăнать. Надежда Васильевна – хисеплĕ анне, чунтан юратнă кукамай. Аннеçĕм, эсĕ пирĕн – ачусен – кун-çулне çуллахи хĕвел евĕр çутатса, ăшăтса тăратăн. Пире лăпка-лăпка ӳстернĕшĕн, тивĕçлĕ ăс-тăн панăшăн, пирĕншĕн тĕслĕх, тĕрев те шанчăк пулнăшăн çĕре çити пуç тайса тав тăватпăр сана. Çуралнă кунпа чĕререн, ăшшăн саламласа çуркуннехи пек çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм, чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, аслă Атăл пек иксĕлми телей, вăрăм кун-çул, ытам тулли савăнăç сунатпăр. Ирсерен хĕвеле кĕтсе илме, шăнкăр-шăнкăр шыв юххине итлеме, кăвак тӳпене курма, нумай-нумай çул пурăнма вăй-халу çиттĕр. Ачусемпе, кĕрĕвӳпе, мăнукусемпе, йышлă тăвануесемпе пĕрпĕрне хисеплесе сума суса, пулăшса, пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр. Çак пăтăрмахлă пурнăçра кулма, шанма тата юратма вăйхал пиллетпĕр кăмăлтан. Аннеçĕм, эсĕ пуртан эпир телейлĕ çынсем. Эпир санпа мухтанатпăр, сана юрататпăр, хисеплетпĕр.

**Чунтан-чĕререн саламлаканĕсем – ывăлĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, виçĕ мăнукĕ тата мĕнпур çывăх тăванĕсем.**

Хăйматлăх аттене – **Кивьял Хапăсра пурăнакан Алексей Анатольевич МАЙОРОВА** – 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн, ăшшăн-ăшшăн саламлатпăр. Тĕнчере мĕнпур ыррине, лайăххине ăна сунатпăр: çурхи хĕвел пек ăшă кăмăл, чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, хуркайăк çулĕ пек вăрăм ĕмĕр, çăлкуç шывĕ пек иксĕлми тапса тăракан вăй-хал, тулăх пурнăç. Çывăх çынсен юратăвĕпе тимлĕхĕ, тус-тăвансен хисепĕ чун-чĕрене ăшăтса тăччăр, çĕнĕ ĕмĕттĕллевсем патне ăнтăлма хавхалантарччăр. Ĕçсем ăнăçса пыччăр, утас çулу яланах тумхахсăр пултăр. Ырри çумне ырри хушăнсах тăтăр, сĕтел çийĕ çăкăр-тăвартан ан иксĕлтĕр.

*Сăлтав ан пултăр кулянмашкăн,*
*Çак пурнăçра сан нихăçан.*
*Ялан маттур, хастар пулмашкăн*
*Телей сунатпăр кăмăлтан.*

**Михайловсен çемйи.**

## ТИВĔÇТЕРӲСЕМ

# Çĕнĕ майсем хушăннă

**Хальхи вăхăтра патшалăх тивĕçтерĕвĕсене электронлă мелпе кӳресси çирĕпленсе пырать. Сăмахран, коммерцилле мар организацисем валли те унччен пулнă тивĕçтерӳсем çумне çĕннисем хушăннă.**

Уйрăммăн илсен, автономлă коммерцилле мар организацисен е фондсен учредителĕсем хăйсен ирĕкĕпе ку учредительсен йышĕнчен тухма пултараççĕ. Анчах пĕр услови пур: енчен те учредитель пĕртенпĕрре пулсан, унăн хăй тытăмран тухиччен çĕнĕ çынна йышăнмалла.

Ку организацисем социаллă тĕллевлĕ статус илесси те паян анлă сарăлнă. Çак статус приоритетлă йĕркепе субсиди тата грант евĕр патшалăх пулăшăвне илме май парать. Тивĕçтерĕве халĕ Юстици министерствин территориаллă органне килмесĕр çăмăллăхлă мелпе кӳреççĕ.

Патшалăх тивĕçтерĕвĕсене электронлă мелпе илнин лайăх енĕсем чылай: патшалăх пошлинине тӳлени кирлĕ мар, документсен пуххине кирек хăш меллĕ вăхăтра яма пулать, коммерцилле мар организацин уполномоченнăй çынни алă пуснине нотариус çирĕплетнине те ыйтмаççĕ.

Онлайн-мелпе патшалăх регистрацийĕ тума документсене Пĕрлехи порталта (www.gosuslugi.ru) памалла. Çак формăпа 2024 çулта 170 ытла коммерцилле мар организаци усă курнă, 2023 çулта – 134. Портал урлă яракан документсене цифрăллă алă пуснипе (ЭЦП) çирĕплетни кирлĕ. Ун «ключне» налук органĕнче е çирĕплетекен центрта илме пулать.

Аса илтеретпĕр, кăçалхи январĕн 1-мĕшĕнчен отчет кампанийĕ пуçланнă, вăл апрелĕн 15-мĕшĕччен тăсăлать. Отчетлăха Раççей Юстици министерствин сайтĕнче (https://nco.minjust.gov.ru) пама юрать. Çакна валли Патшалăх тивĕçтерĕвĕсен порталĕнче учет записĕ тата ЭЦП пулмалла.

Мĕнпур ыйтупа (88352)70-94-52 телефонпа шăнкăравласа Управлени специалисчĕсенчен консультаци илме май пур.

**Лариса СМИРНОВА,**
**Раççей Юстици министерствин республикăри Управленийĕн пай пуçлăхĕн заместителĕ**

# Чăн-чăн патриотизм тĕслĕхĕ

**«Вăрнар муниципаллă округĕн патриочĕсем» обществăлла организаци пĕлтерĕшлĕ, патриотлăхпа тулнă мероприятисене ирттерессине пысăк тимлĕх уйăрать. Вăл 2021 çулхи октябрь уйăхĕнче йĕркеленнĕ.**

## КИРЛĔ ĔÇ

Округри обществăлла организацин членĕсене Тăван çĕршыва юратни, патриотла воспитанипе ĕçлесси пĕрлештерет. Иртнĕ çул ку енĕпе чылай мероприяти йĕркеленĕ.

Пирĕн организацин тĕп енĕ – çамрăк ăрăва Тăван çĕршывăн чăнчăн патриочĕсем пулма вĕрентесси. Çавна май тĕрлĕ шкулсенче 30 ытла Хăюлăх урокĕ ирттертĕмĕр. Тĕп темăсем: Ленинграда фашистсен блокадинчен ирĕке кăларни, Афганистанран Совет çарĕсене илсе тухни, Сталинград патĕнчи паттăрлăх, Раççей Геройĕсен кунĕ, Конституци кунĕ тата ыттисем.

Пĕлтĕр çамрăк патриотсен слечĕсене виçĕ хутчен йĕркелерĕмĕр, чи маттуррисене, хастаррисене палăртрăмăр. Çар кунĕсене халалланă мероприятисене организаци членĕсем ирттереççĕ. Пĕлтерĕшлĕ ĕçе округ администрацийĕпе тачă çыхăнса пурнăçларăмăр.

Çар ĕçĕсен ветеранĕсем те тĕрлĕ çĕрте пулаççĕ. Акă, Шупашкар хулинчи Мухтав аллейине Тинĕс пехотин кунне уявлама çитсе мемориал хăми патне чечексем хучĕç. Туслăхра – вăй. Элĕкри ветеран-моряксемпе Тинĕс-çар кунне паллă турăмăр. Пĕрле авточупусем, спорт мероприятийĕсем, концерт программисем ирттертĕмĕр.

Округра, яллă тăрăхсенче (Чăрăшкас Мăратра, Чăрăш Ишекре, Хирпуçĕнче, Çĕрпелте, Кĕçĕн Кипекре, ытти енче) Çĕнтерӳ, Пограничниксен, Халăх пĕрлĕхĕн кунĕсене пĕрле пухăнса мăнаçлăн уявларăмăр.

Вăрнарсен делегацийĕ тĕнче уçлăхне парăнтарнă чăвашсен мухтавлă ывăлĕ Андриян Николаев çуралнă Шуршăл ялĕнче икĕ хутчен пулчĕ, Космонавтика кунне анлăн уявларĕ. Космонавт аллейинче туслă йыш груша йывăçĕ лартрĕ.

Ятлă-сумлă ентешсен ячĕсем ĕмĕр асра юлччăр тесе тăрăшатпăр. Акă, Катăшра пĕррсмĕш тĕнче вăрçин участникĕсене, тыл ĕçченĕсемпе вăрçă ачисене асра тытса 2 обелиск вырнаçтарнă, полицин «Вурнарский» пайĕнче тăрăшнă сотрудниксен, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пуç хунисен тата СВО участникĕн Александр Никоновăн мемориал хăмисене уçнă çĕре хутшăннă.

Хамăрăн хастар юлташăн – Совет Союзĕн Геройĕн Степан Илларионовăн ячĕпе хисепленекен Кивçурт Енĕшри музей директорĕн Вячеслав Алексеевăн – хастарлăхне палăртмалла. Вăл тăрăшнипе музей кăсăклă экспонатсемпе пуянланнă. Кунта экскурсисем те тăтăшах иртеççĕ.

2024 çулта хамăр тăрăхри ятлă-сумлă çынсемпе – Афганистанри çар ĕçĕсен ветеранĕпе, Петĕр Ялкир поэтăн ывăлĕпе Владимир Тихоновпа, Нина Гречко çыравçăпа тата ыттисемпе тĕлпулусем йĕркелерĕмĕр.

ГСВГ ветеранĕсен хастарлăхне те палăртмалла. Çулленех спартакиадăсем йĕркелеççĕ. Организаци ертӳçи А.Васильев Мускаври иртнĕ ГСВГ ветеранĕсен канашлăвне те хутшăннă.

«Вăрнар муниципаллă округĕн патриочĕсем» организаци СВО участникĕсене гуманитари пулăшăвĕ кӳрессине пысăк тимлĕх уйăрать. Е.Голубцова ертсе пыракан халăх дружини мероприятисенче обществăлла йĕркелĕхе сыхлассине тивĕçтерет.

Организаци ветеранĕсем чылай мероприятие хутшăнаççĕ, хастарсене Астăвăм паллисемпе, Хисеп грамотисемпе, медальсемпе тата ытти наградăсемпе чысларĕç. Калас пулать, обществăлла ĕçсенче тăрăшулăх кăтартнă ытти маттур çын та хисепре. Вăрнар округĕн патриочĕсем кăçал та хăйсен тивĕçĕсене чыслăн пурнăçлама тĕллев лартрĕç.

**Ярослав НИКИФОРОВ,**
**«Вăрнар муниципаллă округĕн патриочĕсем» организаци председателĕ**

# Ĕçлекен пенсионерсен те ӳсет

**Раççей Социаллă фончĕн Чăваш енри уйрăмĕ январĕн 1-мĕшĕнчен ĕçлекен пенсионерсен пенсине индексацилет. Ĕçлекен пенсионерсен пенсине 2016 çултанпа индексацилемен. Халĕ лару-тăру улшăнчĕ. Январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса индексацие тавăрчĕç. Халĕ ĕçлекен пенсионерсем те ĕçлеменнисем пекех çулсеренхи ӳсĕмех тивĕçĕç. Паллах, уйрăмлăхсем пур.**



## ПЕНСИСЕМ

Президент 2024 çулта алă пуснă улшăнусемпе килĕшӳллĕн ĕçлекен пенсионерсен пенсийĕ ĕçлеменнисен тӳлевĕпе танах индексациленет. Ку таранччен пенсионер индексацие ĕçлеме пăрахнă хыççăн кăна илме пултарнă. Халĕ вара Раççейри Социаллă фондăн Чăваш енри уйрăмĕ пур пенсие те тивĕçлĕ канури çын ĕçленине пăхмасăрах индексацилет. Анчах тӳлев виçи вĕсен пĕр пек пулмасть.

Пенси хăпарнин уйрăмлăхĕ çакăнта: индексаци халĕ паракан пенсие мар, унăн ĕçленĕ тапхăрти пур индексацине те шута илекен çирĕплетнĕ виçене пырса тивет.

Индексаци шайĕ халĕ ĕçлекен пенсионер илсе тăракан пенси виçинчен мар, вăл ĕçлемен пенсионер пулнă пулсан ун чухне хăйне тивĕçме пултарнă пенси виçинчен шутланать. Тĕслĕхпе çирĕплететпĕр. Акă, ĕçлекен пенсионер халĕ уйăхне 19 527,94 тенкĕ илсе тăрать тейĕпĕр. Ĕçлемен пенсионер пулнă пулсан вăл 36 351,59 тенкĕ илсе тăнă пулĕччĕ. 2025 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчи индексаци 7,3 процентпа танлашать. Индексацие 36 351,59 тенкĕрен (пĕтĕм индексацие шута илсе) шутлаççĕ. Çапла вара ĕçлекен пенсионерăн пенсийĕ уйăхне 2 653,11 тенкĕ ӳсет ( 36 351,59 тенкĕрен 7,3 процентĕ). Алла 22 181,05 тенкĕ (19 527,94 тенкĕ + 2 653,11 тенкĕ) илме пуçлать. Çакă индексацие пенсионер хăй ĕçленĕ чухне илеймен тӳлевсене шута илсе пурнăçлаççĕ, пенсине вара 2025 çулхи индекс шучĕпе тӳлеме пуçлаççĕ.

Пенсионер ĕçлеме пăрахсан 2025 çулхи индексаци тӳлевĕ çумне тата хăпарнă пенсие илме пуçлать, унăн виçине çын ĕçленĕ вăхăтра индексаци илменнине пурне те шута илсе палăртаççĕ. Çапла чи пысăк прибавкăна маларах ĕçрен пăрахнисем илме пуçлаççĕ. Тӳлев вара пурин те ӳсет.

Ĕçлекен пенсионерсен пенсине каллех индексацилесси страхлав пенсине тата ытти социаллă тӳлевсене пырса тивет. Вăл шута инвалиднăçпа тата тăрантаракана çухатнипе паракан пенси те кĕрет.

Ĕçлекен пенсионерсен индексацийĕ çумне августра ӳстернĕ тӳлев хушăнать. Ăна Раççейри Социаллă фондăн Чăваш енри уйрăмĕ çулсеренех ĕçпе тивĕçтерекенсенчен ĕçлекен пенсионерсемшĕн килекен страхлав тӳлевĕсене кура ирттерет.

### Чылайăшне аслă çулхисене пăхнишĕн паракан 1200 тенкĕ компенсаци тӳлевĕпе сыхăннă ыйту кăсăклантарать...

2025 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен 1-мĕш ушкăнри хевтесĕр çынсене тата 80 çултан иртнисене пăхакан ĕçлеме пултаракан граждансене уйăхсерен паракан тӳлеве пама пăрахаççĕ. Укçана фонд хăй тĕллĕнех 1-мĕш ушкăнри хевтесĕр çынсен тата 80 çултан иртнисен пенсийĕ çумне хушса парать.

Енчен те 2025 çулта гражданин кама та пулин пăхать пулсан, унăн çакна клиент службинче заявлени çырса çирĕплетмелле. Ун хыççăн вăл пăхнă тапхăра ИЛС-ра (харпăр хăй счечĕ) шута илеççĕ. Енчен те асăрхакан çын тата пулăшу илекен уйрăм пурăнаççĕ пулсан, пулăшу илекенрен е унăн саккунлă представителĕнчен чăннипех те пулăшу пани çинчен тата çакă хăш тапхăрта пулни çинчен çырса çирĕплетни кирлĕ. Ăна илме май килмесен (пулăшу илекенĕ вилнĕ пулсан е чире пула) çемьере пурăнакансем çырса параççĕ.

### 2025 çулта Социаллă фонд енĕпе ятарлă çар операцийĕн ветеранĕсем валли çĕнĕлĕхсем пур-и?

Чăнах та, ятарлă çар операцийĕн ветеранĕсем Социаллă фондăн реабилитаци центрĕсенче сывлăха çирĕплетме пултараççĕ. Медицина реабилитацийĕпе тата санаторипе курорт сиплевĕ енĕпе Фонд çумĕнчи реабилитаци центрĕсенче демобилизациленĕ СВО салтакĕсем пулăшу илме пуçлаççĕ. Раççейри Социаллă фондăн Чăваш енри уйрăмĕ ятарлă çар операцине хутшăнакана сиплев тапхăрĕ вăхăтĕнче харпăр хăй пулăшăвĕпе тивĕçтерет. Реабилитаци тапхăрĕ 25 кунпа танлашать. Санаторипе курорт сиплевĕ 21 кунччен пырать, унпа çулталăкра пĕр хутчен усă курма юрать.

Реабилитаци центрĕсене янă чухне ветеранăн сывлăхĕ çинчен калакан медицинăпа социаллă экспертиза кăтартăвĕсене шута илеççĕ. Енчен те вăл тĕрĕслев витĕр тухнă, анчах та инвалиднăç çук пулсан реабилитаци центрĕнче диагностика ирттерсе сиплев курсне палăртаççĕ. Ятарлă çар операцине хутшăнакан Раççей Геройĕ е 1-мĕш ушкăнри инвалид пулсан, Социаллă фондăн реабилитаци центрне черетсĕрех сывалма кайма пултарать. Заявление клиент службинче е МФЦ-ра çырма май пур. Февральтен Патшалăх тивĕçтерĕвĕсен порталĕ урлă та çакна тума пулать. Ун тăрăх специалистсем йышăнăва икĕ кунта палăртаççĕ тата пĕр кунта çыракана пĕлтереççĕ.

### Енчен те çемье ытти регионтан Чăваш ене куçса килнĕ е регионтан тухса кайнă пулсан пĕрлехи пособие илме ăçта пурăннине çирĕплетмелле-и?

Кун пек чухне пурăнмалли вырăн улшăнни çинчен Раççейри Социаллă фондăн уйрăмне пĕлтермелле. Пособи илмелли ирĕке, çавăн пекех унăн виçине конкретлă регионти пурăнмалли чи пĕчĕк виçе тăрăх палăртаççĕ. Пособие малашне те илсе тăрас тесен ашшĕ-амăшĕн çĕнĕ вырăнти клиент службинче заявлени çырмалла.

Фонд çемье çинчен даннăйсене патшалăх информаци тытăмĕ урлă уçăмлатать. Ашшĕ-амăшĕ налук тӳлесе тăракан регион çинчен е, тĕслĕхрен, ĕçсĕррипе пособи илни çинчен калание тĕрĕслеççĕ. Çавăн пекех амăшĕ е ашшĕ пенси е комуналлă пулăшусемшĕн тӳленин çăмăллăхĕсене ăçта илнине шута илеççĕ. Кунсăр пуçне ăçта пурăннине социаллă контракт çырни е нумай ачаллă çемье статусне илни çинчен калакан даннăйсем çирĕплетеççĕ.

## ПУЛĂШУ

# Пĕлтерĕшлĕ служба

**Январĕн 1-мĕшĕнчен республикăра пурнăçран уйрăлнă çынсен ӳчĕсене судпа медицина экспертизин бюроне тата паталогоанатом уйрăмне кунĕнçĕрĕн çитерес системăна ĕçлеттерсе янă.**

Ку – пĕлтерĕшлĕ служба. Вăл кунĕçĕрĕпе ĕçлĕ, çын вилсен тăванĕсене машина шыраса хăшкăлассинчен хăтарĕ.

Çак ĕçе йĕркелесе янăранпа ятарлă машинăсемпе 100 ытла çын ӳтне моргсене çитернĕ.

Пулăшни аван. Анчах çакă тата пĕлтерĕшлĕрех. 2023 тата 2024 çулсемпе танлаштарсан январь уявĕсенче 104 çын сахалрах вилнĕ. Алкогольпе наркăмăшланса пурнăçран уйрăлнă тĕслĕхсем те сахалланнă. Çавăн пекех – инкексенче тата чрезвычайлă лару-тăрусенче те.

Чăваш ен Пуçлăхĕ Олег Николаев ырă улшăнура асăрхаттарулă мероприятисем пысăк вырăн йышăннине палăртнă.

## ÇАР ИСТОРИЙĔН ДАТИСЕМ

- **Январĕн 12-мĕшĕ.** Çак кун 1945 çулта совет çарĕсем Висла –Одер операцине пуçланă. Жуков тата Конев çарĕсем Польшăра нимĕçсен вăйлă çар пĕрлешĕвне çапса аркатнă. Февраль пуçламăшĕнче вара пирĕн çарсен Берлина çитме 60–70 км çеç юлнă.
- **Январĕн 17-мĕшĕ.** Çак кун 1945 çулта совет çарĕсем Варшавăна нимĕç фашисчĕсенчен хăтарнă.
- **Январĕн 27-мĕшĕ.** Çак кун 1944 çулта совет çарĕсем Ленинград хулине нимĕç фашисчĕсен блокадинчен хăтарнă.

# Список лиц, представленных к вручению медали «За доблестный труд в Великой Отечественной войне 1941–1945 г.г.»

*(Продолж. Начало в №77–80, 82–93, 1–3)*

**По Мамалаевскому колхозу им. Ворошилова**

Борисова Анастасия Васильевна – колхозница
Васильев Никандр Васильевич скотник МТФ
Васильев Игнатий Васильевич – машиновед
Васильева Дарья Васильевна – старший конюх
Васильева Евгения Васильевна – 1926 г. – колхозница – мобилизована на торфоразработку в Ивановскую область
Васильев Иван Васильевич – колхозник
Васильева Евдокия Васильевна – колхозница
Волков Александр Григорьевич – охранник
Васильева Мария Гурьевна – завхоз
Васильева Александра Осиповна – колхозница
Васильева Таисия Васильевна – ученица
Владимирова Вера Алексеевна – колхозница
Васильева Мария Васильевна – звеньевая
Гончаров Сергей Михайлович – машиновед
Ластухин Герман Романович – плугарь
Ластухин Филип Романович – колхозник
Лукина Мария Антоновна – бригадир, агитмасработа
Лукина Анастасия Яковлевна – бригадир, ветфельдшер
Лукина Антонина Антоновна – звеньевая
Ластухин Василий Петрович – колхозник
Лукин Николай Антонович – колхозник, член правления
Ластухина Евдокия Андреевна – колхозница
Медведева Александра Ивановна – 1920 г. – колхозница, мобилизована на лесозаготовку – возчик
Медведева Перасковья Ивановна – колхозница
Медведева Анастасия Владимировна – 1906 г. – колхозница, мобилизована на лесозаготовку – возчик
Макарова Александра Сидоровна – колхозница
Михайлов Петр Михайлович – шорник
Матвеев Михаил Матвеевич – шорник-машиновед
Матвеева Евгения Максимовна – колхозница
Максимова Анна Максимовна – колхозница
Максимов Григорий Максимович – охранник
Музякова Клавдия Петровна – 1922 г. – колхозница, мобилизована на лесозаготовку – лесоруб
Макаров Ефим Макарович – колхозник
Николаева Александра Григорьевна – колхозница
Николаева Анисия Николаевна – свинарка
Никифорова Екатерина Никифоровна – звеньевая
Никифорова Анна Никифоровна – доярка
Никонорова Евдокия Никоноровна – колхозница
Николаева Матрена Федоровна – колхозница, вдова
Осипова Татьяна Федоровна – колхозница
Осипов Григорий Осипович – колхозник
Прокопьева Раиса Семеновна – звеньевая молодая
Пономарев Геннадий Семенович – молодой пахарь
Павлова Мария Павловна – 1926 г. – колхозница – ударница по возделыванию зерновых культур, мобилизована на лесозаготовку – лесоруб
Петрова Евдокия Петровна – колхозница – ударница, вдова
Павлов Илья Павлович – шорник, глава семьи двух ударников
Павлова Мария Павловна – 1926 г. – колхозница, мобилизована на лесозаготовку – лесоруб
Степанов Аркадий Степанович – конюх, фронтовик
Степанова Нина Степановна – колхозница
Степанова Пелагея Степановна – 1926 г. – телятница, мобилизована на торфоразработку в Ивановской области
Спиридонова Нина Осиповна – колхозница
Семенова Мария Семеновна – 1920 г. – колхозница, мобилизована по вывозке топ. дров для железнодорожного транспорта
Сергеева Мария Меркурьевна – повариха – ударница, жена фронтовика
Сергеева Анна Дмитриевна – повар – член правления
Сергеев Андрей Иванович – машиновед
Савельев Петр Савельевич – конюх, старик
Семенова Евдокия Васильевна – колхозница, жена фронтовика
Сергеева Наталия Федоровна – бригадир. По всем видам бригада занимает 1 место
Саватьев Тихон Саватьевич – старый колхозник, член правления, активист общественной работы
Семенова Софья Семеновна – 15-летняя ударница
Семенова Ксения Семеновна – колхозница
Сергеев Иван Сергеевич – кузнец, за хороший ремонт с/м ежегодно премирован
Спиридонова Варвара Спиридоновна – молодая колхозница
Федоров Василий Миронович – колхозник – ударник
Федоров Николай Федорович – ученик 7 класса – ударник
Федорова Мария Федоровна – конюх, один из лучших
Федорова Надежда Федоровна – доярка, агитатор, редактор
Чалушкина Анна Иллариононвна – 1919 г. – колхозница, вдова, мобилизована по вывозке топ. дров для железнодорожного транспорта
Чалушкин Ефрем Иванович – мельник, 70 лет
Юлмасова Фекла Николаевна – колхозник
Юлмасов Василий Ефремович – 1892 г. – колхозник, лесозаготовка – возчик
Юлмасова Екатерина Васильевна – свинарка
Юлмасова Мария Васильевна – повар
Юлмасова Антонина Васильевна – ученица
Юлмасова Анастасия Трофимовна – колхозница
Ягодова Екатерина Семеновна – колхозница
Языкова Анастасия Ильинична – колхозница
Языкова Мария Спиридоновна – колхозница
Языкова Ксения Максимовна – колхозница, вдова
Языков Иван Никифорович – колхозник
Языкова Евдокия Митрофановна – колхозница
Языкова Анна Васильевна – доярка
Языкова Мария Андреевна – колхозница
Языкова Анисия Андреевна – бригадир
Языков Геннадий Егорович – колхозник
Языкова Татьяна Андреевна – скотница МТФ, мобилизована на лесозаготовку – лесоруб
Яковлева Антонина Яковлевна – звеньевая

**По Булатовскому колхозу им. Молотова**

Актисова Екатерина Павловна – колхозница
Андреева Александра Андреевна – колхозница
Актисова Перасковья Дмитриевна – колхозница
Андреев Феофан Андреевич – колхозник Трудармии, г.Алатырь
Андреева Татьяна Ивановна – колхозница
Батленова Нина Яковлевна – колхозница – мобилизована на лесозаготовку – лесоруб

**От редакции: Уважаемые подписчики! Если у ваших родных из данного списка лиц имеются фотографии, просим их принести или отправить в редакцию: по эл.почте press_vurnar@rchuv.ru, svetok11@mail.ru, по Телеграм, Ватсап, Вайбер по тел. 89373722600.**

**Список исследован краеведом из д.Хорнзор Федором КУЗЬМИНЫМ**

*(Продолжение следует)*

# Шыв-шур хĕрринче тимлĕ пулмалла

**Ку хĕлле тĕлĕнмелле ăшă тăрать. Шартлама сивĕсем хальлĕхе хăратмарĕç-ха. Çакăн пек улшăнуллă çанталăкра шыв-шур çинчи пăр, хулăм курăнсан та, питĕ шанчăксăр. Ăшăпа, ирĕлекен шывсемпе, çумăр çунипе вăл хăвăрт кăпăшланать. Çавăнпа та чарусене пăхăнмалла: çирĕп мар пăр çине тухма, ваксемпе çурăлнă вырăнсен çывăхне пыма, тăвайккисенчен çунашка-йĕлтĕрпе пăр çине ярăнса анма, шыв-шур урлă тĕттĕмре çӳреме, паллă мар вырăнсенче каçма юрамасть.**



## СЫХЛĂХ

■ Çыншăн пĕве-юханшывра 10 сантиметртан кая мар шăннă пăр хăрушсăр шутланать. Вăл уйрăмах хăвăрт юхăмлă, çăлкуçлă, каяш шывсем юхса тухакан, курăклă-тĕмлĕ вырăнсенче шанчăксăр. Енчен те сывлăш температури виçĕ кунтан ытларах 0 градусран çӳллĕрех тăрать-тĕк, пăр çирĕплĕхĕ 25 процент чакать. Кăвак тĕсли – хулăм, шуррин çирĕплĕхĕ 2 хут сахалрах, сарăраххи вара пысăк хăрушлăх кăларать.

■ Ачасене те çирĕп ăнлантармалла: пĕвесемпе кӳлĕсем – вăйă вырăнĕ мар. Унта вĕсем хăйсем тĕллĕн ан çӳреччĕр.

■ Пулăçсен те асăрханулларах пулмалла: пĕр вырăнта нумайăн пухăнма, шăтăксене пĕр-пĕринчен 5–6 метртан çывăхрах пăралама, пулла шырлансем патĕнче тытма юрамасть.

Пулăçсене 15–20 м тăршшĕ шнур пĕрле илме сĕнеççĕ. Унăн пĕр енче груз пулмалла, тепринче – ункă. Çĕçĕ е шĕвĕр урăх япала илсен те лайăх – инкекре çăлăнса тухма ансатрах.

Мĕнле тытмалла-ха хăйне сивĕ шыва кĕрсе ӳкнĕ çыннăн?

■ Чи малтанах хăраса ӳкме, кирлĕ мар хусканусем тума юрамасть. Алăсене икĕ еннелле сарăр та пăр хĕррисенчен çакланма тăрăшăр. «Путатăп», – тесе пулăшу чĕнĕр. Кăкăрпа асăрханса выртса малтан пĕр урана, хыççăн теприне пăр çине куçарма хăтланăр. Вăл чăтрĕ-тĕк, майĕпен хăрушсăр вырăна çитме тăрăшăр.

■ Шывра путакана çăлма тухнă çыннăн та асăрханулăх кирлĕ. Чи малтанах кама та пулин васкавлă пулăшу е çăлавçăсене чĕнме ыйтмалла. Е хăвăрăн «112» номерпе шăнкăравламалла. Вăрăм патак е хăма, вĕрен илсен лайăх. Шарфсене, пиçиххисене, тумтире пĕрле çыхни те юрать. Çак «çăлав хатĕрĕсене» умра тĕксе, алă-урасене сарса инкек вырăнĕ патнелле асăрханса шумалла. Анчах çывăхах пымалла мар, темиçе метрта чарăнмалла. Алăра мĕн пуррине тăсса путакана туртса кăлармалла. Хăрушă вырăнтан çав мелпех майĕпен куçса тухмалла.

■ Инкеке лекнĕ çынна ăшă кирлĕ: ун çинчен йĕпе тумтире хывăр, кĕлеткине хĕреличченех сăтăрăр, вĕри чей ĕçтерĕр. Алкогольлĕ шĕвексем пама вара вуçех юрамасть.

Аса илтеретпĕр: Пĕрлĕхлĕ çăлав службин номерĕ – «112».

**Ирина ЯКОВЛЕВА**

# Асăрхавра – çул-йĕр хăрушсăрлăхĕ

**Ахальтен мар çул-йĕре хăрушлăх пысăк вырăн теççĕ. Çул çине тухаканăн кашнин – водителĕн, велосипедистăн, çуран çӳрекенĕн ... – йĕркелĕхе тивĕçтерекен правилăсене пăхăнмалла. Кунта çирĕп дисциплина кирлĕ. Ăна асăрхаса тăрассишĕн ĕнтĕ автоинспекторсем яваплă.**

## ЙĔРКЕЛĔХ

Полицин «Вурнарский» пайĕн ГИБДД сотрудникĕсем те çул юхăмĕн хăрушсăрлăхне тивĕçтерессипе, инкек-синкексене асăрхаттарассипе пĕлтĕр тĕллевлĕ тимленĕ. Ведомство йĕркеленĕ мĕнпур профилактика мероприятийĕсене те анлăн ирттернĕ.

ГИБДД уйрăмĕн информацийĕ тăрăх, иртнĕ 12 уйăхра çул-йĕр правилисене пăснине пула 14 инкек çыраннă. Шел те, синкерлĕ вĕçленнисем те пур – вĕсенче виçĕ çын пурнăçĕ татăлнă. Çавăн пекех тепĕр вунсакăр çыннăн сывлăхĕ тĕрлĕрен сиенленнĕ.

Паллах, ГИБДД службин тĕп енĕсенчен пĕри – çул çинче тухма пултаракан инкеклĕ лару-тăрусене асăрхаттарасси. Чи малтанах хăрушлăх кăларакан сăлтавсене сирме тăрăшни. Иртнĕ çул, акă, автоинспекторсем асăрхаври çулсем çинче йĕркене пăснă 3294 тĕслĕхпе административлă явап тыттарнă.

Ӳсĕрле руль умне ларакансемпе кĕрешесси уйрăмах çирĕп тимлĕхре – ун пеккисене пĕлтĕр 164 тытса чарнă. Çав шутра вуниккĕшне – пĕрремĕш хут мар эрех ĕçсе машинăпа тухнăшăн. Вĕсен уголовлă явап тытма тивнĕ.

Хăрушсăрлăха тивĕçтересси, асăрхаттару ĕçĕ кăçал та палăртнă тĕллевсемпе иртĕ.

**Ирина ЯКОВЛЕВА**


## СЛУЖБА ПО КОНТРАКТУ




**400 тыс. руб. единовременно (при заключении контракта на срок от года и более);**

**1 400 000 руб. единовременно (региональная денежная выплата);**

**от 210 тыс. руб. в месяц (в зависимости от воинского звания, должности и выслуги лет).**

**По вопросам контрактной службы можно обратиться по адресу: п.Вурнары, ул.Советская, д.20 (администрация округа), каб. 307 с 8 до 17 часов. Тел. 8(83537) 2-51-87, в военный комиссариат по Ибресинскому и Вурнарскому районам.**

**Т. 8-937-397-30-09 (круглосуточно).**



**Главный редактор**
**АУ «Редакция Вурнарской районной газеты «Çĕнтерӳ çулĕ» («Путь победы») Минцифры Чувашии – С.В.ЧИКМЯКОВА.**

Учредители – Министерство цифрового развития, информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики, АУ «Редакция Вурнарской районной газеты «Çĕнтерӳ çулĕ» («Путь победы») Минцифры Чувашии.
Газета зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике – Чувашии, свид. ПИ № ТУ 21-00227 от 2 октября 2012 года.

**Адрес редакции и издателя:** 429220, Чувашская Республика, п.Вурнары, ул.Советская, д.15, 2-й этаж.
**Адрес типографии:** 429220, Чувашская Республика, п.Вурнары, пер.Коммунальный, 4.

НАШИ ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор – 2-52-30, редакторы, прием рекламы – 2-52-57, менеджер – 2-55-57, типография – 2-59-40.

**Ответственность за точность приведенных фактов, опубликованных в газете, несут авторы, рекламодатели. Рукописи не рецензируются, не возвращаются. Материалы на правах рекламы публикуются под знаком** Ⓟ

**Индекс издания П4304.**
Печать офсетная. Объем 1 п.л.
Тираж 3493 экз. Заказ 20.

**Çĕнтерӳ çулĕ (Путь победы)**
Газета выходит на чувашском языке два раза в неделю – по вторникам и субботам.
Время подписания в печать – 14 ч. 30 мин. По графику – 15 ч.
Отпечатано в типографии АУ «Редакция Вурнарской районной газеты «Çĕнтерӳ çулĕ» («Путь победы») Минцифры Чувашии.